Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

21 (7554) № * Юн кун, 2008 çулхи мартăн (пуш) 19-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Республикăра**

## Чăваш Ен территорийĕнче усă курман çĕрсем пулмалла мар

Тунти кун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров республика правительствин тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу иртгернĕ.

Президент çак эрне вĕçĕнче районсемпе хуласен пуçлăхĕсен Канашĕн тата Чăваш Республикин Президенчĕ çумĕнчи приоритетлă наци проекчĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлекен Канашăн пĕрлехи ларăвĕ иртессе пĕлтернĕ. Кун йĕркинчи тĕп ыйтусенчен пĕри – ӳрĕк-сӳрĕк хуçасем пăрахăçа кăларнă усă курмалли çĕрсене хуçалăх çаврăнăшне кĕртессине йĕркелесси. Президент ял хуçалăх министрне М.В. Игнатьева, пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрне А.М. Стальскаяна çак сферăри ĕç-хĕле пур енлĕн тишкерме, лару-тăру пирки пĕлтерме хушнă. «Чăваш Ен территорийĕнче усă курман çĕрсем пулмалла мар. Вĕсем пурри муниципалитет шайĕнчи ертсе пыракан тытăмсем кирлĕ пек ĕçлесе пыманнине çирĕплетет. Çак ыйтăва татса парас енĕпе хушнине вăхăтра пурнăçламашкăн питĕ çирĕп ыйтатпăр», – палăртнă республика пуçлăхĕ.

**ЧР ПА пресс-службi.**

**Тĕрĕслĕх**

## Т. Моисеева айăплă мар

Иртнĕ эрнере тĕрлĕ хаçатпа теле-радиостанци пирĕн ентешĕмĕр Татьяна Моисеева биатлонистка çинчен пурне те пăшăрхантаракан хыпар пĕлтернĕччĕ. Спортсменка нарăс уйăхĕнче Швецире иртнĕ Тĕнче чемпионатĕнче допингпа усă курнă имĕш. Лаборатори кăтартăвĕсенче дексаметазан – йышăнма юраман препарат тупса палăртнă. Татьянăн, Раççейри биатлонистсен союзĕн ертӳçин Александр Тихоновăн тата унăн врачĕн Андрей Дмитриевăн кĕске вăхăтра ăнлантару хучĕ çырма тивнĕ. Вырсарни кун Тĕнчери биатлонистсен сюзĕнчен Т. Моисеева тĕлĕшпе пуçарнă ĕçе хупнине, Муркаш пики айăпсăр иккенне пĕлтернĕ. Таньăн çак препаратпа куç чирĕнчен сипленмешкĕн усă курма тивнĕ тесе йышăннă.

Паллах, эпир тĕрĕслĕх Т. Моисеева енче пуласса шаннă. Çак тĕрĕслĕх çиеле тухни Муркашсене, тăванĕсене савăнтарать. Ентешĕмĕре вара спортри çивĕч кĕрешӳсенче малалла та ăнăçусем сунатпăр.



*Йĕлтĕрпе чупса район пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн иртнĕ шăмат кун вуннăмĕш хут ăмăртусем иртрĕç. Пурĕ 54 команда, 250 йĕлтĕрçĕ старта тухрĕ.*

*Сăн ӳкерчĕкре: стартра район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хуçалăхсен, учрежденисемпе организацисен ертӳçисен пĕр ушкăнĕпе.*

*Ăмăрту мĕнле иртни пирки тĕплĕнрех – 6-мĕш страницăра.*

***Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ***

## Тăван çĕршывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине уявлама хатĕрленесси тата ăна ирттересси çинчен

Тăван çĕршывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçинче фашизма çĕнтернин обществăпа политика тата истори пĕлтерĕшне шута илсе, Чăваш Енĕн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсен паттăрла ĕçне тивĕçлипе хак парса çапла йышăнатăп:

1. Чăваш Республикинче граждансем, общество пĕрлешĕвĕсем активлă хутшăннипе 2010 çулта Тăван çĕршывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине уявлассине йĕркелемелле.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:

Тăван çĕршывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине уявлассине хатĕрленсе ирттерес енĕпе йĕркелӳ комитечĕ тумалла тата унăн йышне çирĕплетмелле;

Курск патĕнчи çапăçусенче нимĕç фашисчĕсене çапса аркатнăранпа, Ленинград блокадине татнăранпа 65 çул çитнине, çавăн пекех Тăван çĕршывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçин ытти паллă тапхăрĕсене, республикăри «Ăрусен ас тăвăм эстафети» гражданпа патриот акцине халалланă мероприятисене ирттерессине пăхса хăварса Тăван çĕршывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине уявлассине хатĕрленсе ирттерес енĕпе мероприятисен планне туса хатĕрлемелле тата мероприятисене пурнăçласа пынине массăллă информаци хатĕрĕсенче çутатассине тивĕçтермелле;

вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле çамрăксене çарпа патриотла воспитани парас ĕçе вăйлатмалла.

3. Районсемпе хуласен администрацийĕсене, харпăрлăхăн мĕн пур формиллĕ организацисене Тăван çĕршывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалланă мероприятисене хатĕрленсе ирттерессипе çыхăннă ĕçе активлă хутшăнма сĕнес.

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2008, пуш, 7, 20 №.

**Райадминистрацире**

## *Хисеп грамотисене тивĕçнĕ*

Чуманкасси ял тăрăхĕн администрацийĕ, «Моргаушская» чăхчĕп фабрики, Муркашри 13-мĕш номерлĕ аптека, Муркаш райповĕн канашĕ, «Герой», Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕсем, «ВолгаТелеком» уçă акционер обществин Муркаш районĕнчи линипе техника цехĕ ыйтнисене тивĕçтерсе район администрацийĕн пуçлăхĕн февралĕн 28-мĕшĕнчи 119 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Ял хуçалăх производствинче тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн:

– **Валентина Геннадьевна ГРАЧЕВАНА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин апат хатĕрлекен цехĕн операторне;

– **Валерий Анатольевич ЛЕОНТЬЕВА**, «Герой» хуçалăхăн тĕп инженерне;

– **Елизавета Федоровна ФЕДОРОВАНА**, Чкалов яч. хис. хуçалăхăн машинăпа ĕне сăвакан операторне.

2. Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн **Перасковия Ильинична ИЛЬИНАНА**, ЧР «Муркашри 13-мĕш номерлĕ аптека» патшалăх унитарлă предприятийĕн Йӳçкассинчи 67-мĕш номерлĕ аптека санитаркине.

3. Çыхăну органĕсенче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн **Зоя Аверкиевна ВОРОБЬЕВАНА**, «ВолгаТелеком» уçă акционер обществин Муркаш районĕнчи линипе техника цехĕн электромеханикне.

4. Потребительсен кооперацийĕнче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн **Зоя Григорьевна ЗАХАРОВАНА**, Муркаш райповĕн Лантăшри çăкăр пекарнин çăкăр пĕçерекенне.

5. Районăн культура традицийĕсене упранăшăн тата хушса пынăшăн **Геннадий Иванович ИВАНОВА**, Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Якаткасси ялĕнче пурăнакана.

**Çитĕнӳ**

## *Муркаш районĕ – виççĕмĕш*

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2008 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнче Чăваш Республикин муниципаллă районĕсем тата хула округĕсем хушшинчи 2007 çулхи экономика ăмăртăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Хула округĕсем хушшинче 1-мĕш вырăна Шупашкар хули, 2-мĕш вырăна Канаш хули, муниципаллă районсем хушшинче 1-мĕш вырăна Етĕрне районĕ, 2-мĕш вырăна Шупашкар районĕ, 3-мĕш вырăна Муркаш районĕ тивĕçнĕ.

**Партисен пурнăçĕнчен**

## Политканаш ларăвĕ иртрĕ

Ĕнер «Единая Россия» политика партийĕн районти уйрăмĕн политканашĕн черетлĕ ларăвĕ пулчĕ. Ăна асăннă партин районти политканашĕн секретарĕ А.Н. Иванов ертсе пычĕ. Чи малтанах унта «Единая Россия» политика партийĕн вырăнсенчи пуçламăш уйрăмĕсенче отчетпа суйлав кампанийĕ мĕнле пынине пăхса тухрĕç. Ку ĕçе март уйăхĕнче вĕçлемеллине, ун вăхăтĕнче партин вырăнти уйрăмĕсен ĕçне-хĕлне тĕплĕн тишкермеллине палăртрĕç. Чылай пуçламăш уйрăмсенче ĕçе лайăхрах йĕркелесе пымалли пирки каларĕç.

– Вырăнсенче халăхпа тачă çыхăнса ĕçлемелле, тĕрлĕ мероприятисем ирттермелле. Çынсем парти ĕçне курса тăччăр, – терĕ Альберт Николаевич.

Ларура политканаш членĕсем çавăн пекех РФ Президенчĕн суйлавне пĕтĕмлетрĕç. Суйлава вырăнсенчи уйрăмсем епле хутшăннине тишкерчĕç.

Çитес вăхăтра «Единая Россия» политика партийĕн регионти уйрăмĕн конференцийĕ иртмелле. Ларура унта кайма делегат суйлас ыйтăва та пăхса тухрĕç.

**Л.ПАВЛОВА.**

**Гражданла оборона ыйтăвĕсемпе**

## *Хамăра хӳтлĕхре туяс тесен*

***Чрезвычайлă лару-тăру кирек хăш вăхăтра та сиксе тухма пултарать. Производствăра та, çул çинче те тĕрлĕ инкексем кĕтмен çĕртен пулаççĕ. Терророрла актсемпе социаллă взрывсем пулмаççĕ тесе те никам та шантарса калама пултараймасть. Çак инкексем çухатусемсĕр иртмеççĕ. Уйрăмах ачасем хӳтлĕхсĕр туяççĕ хăйсене çак вăхăтра.***

***Инкеке сирсе ярас тесен хăрушлăх çинчен, ăна кăларса тăратакан сăлтавсем çинчен пĕлмелле. Çав инкекрен асăрханмалли тата ăна пĕтермелли çул-йĕре тупма пĕлмелле. Мĕнле майпа?***

***– Ачасене хăйсене тата ыттисене хӳтĕлеме вĕрентмелле, – тет кун пирки район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пай ертӳçи Н.П. МИЛЮТИН. Шăпах çак ĕç районта мĕнле пулса пыни пирки каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ унран.***

**– Николай Панфилович, шкул ачисем паян тĕрлĕ хăрушă лару-тăруран сыхланма пĕлеççĕ, тесе калама пулать-и?**

– Гражданла оборона, халăха хӳтĕлес енĕпе тата пурнăça хăрушсăрлатмалли мелсене районти вĕрентӳ учрежденийĕсенче ОБЖ урокĕсенче, çавăн пекех класс тулашĕнче ирттерекен мероприятисенче вĕренеççĕ. Шкулти тата районти çамрăк армеецсен финалти «Зарница» тата «Орленок» вăййисене хатĕрленсе ирттернĕ чух та ачасем çав мелсене ăша хываççĕ. Занятисенче ачасем тĕрлĕрен хăрушă лару-тăрупа тата çавăн чухне хăйсене мĕнле тытмаллипе паллашаççĕ. Калăпăр, пушар пулсан, хулигансем тапăнас-мĕн тăвас пулсан мĕн тумалла? Е вăрманта çухалса кайсан, пăр çинче инкеке лексен мĕн тумалла тата? Электричествăпа, газ оборудованийĕсемпе мĕнле тĕрĕс усă курмалла? Çаксене йăлтах вĕренеççĕ ачасем. Аслă классенчи ачасемпе çак вĕренĕве Чăваш Республикинчи гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăрупа ĕçлекен патшалăх комитечĕн вĕрентӳпе методика центрĕнче вĕренсе хатĕрленнĕ ОБЖ преподавателĕсем ирттереççĕ. Вăтам тата пуçламăш классенче вĕренекенсем вара ку енĕпе пĕлĕве ытти предметсемпе пĕрлештернĕ уроксенче тата класс тулашĕнчи мероприятисенче, практика занятийĕсенче илеççĕ.

**– Кĕçĕн çулсенчи ачасем хăрушсăрлăх правилисене вĕренес юхăмран тăрса юлмаççĕ-и?**

– Кунта пысăк яваплăх ача сачĕсен ертӳçисем çине тиенет. Ыттисене хăрушсăрлăх правилисене вĕрентес тесен вара чи малтанах ăна хамăрăн, çитĕннисен, алла илмелле. Çак тĕллевпе кăçалхи мартăн 6-мĕшĕнче вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн методпӳлĕмĕнче ачасене хӳтĕлес, вĕсене тĕрлĕ инкекрен хӳтĕленме вĕрентес ыйтупа заняти ирттертĕмĕр. Палăртса хăвармалла, асăннă мероприяти Муркаш районĕн гражданла оборона енĕпе, чрезвычайлă лару-тăрусенчен асăрхаттарассипе тата вĕсене пĕтерессипе, пушар тата шыв çинчи хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессипе çыхăннă тĕп мероприятисен ĕç планĕпе килĕшӳллĕн иртрĕ. Унта ача сачĕсен заведующийĕсемпе вĕсенчи медицина ĕçченĕсем хутшăнчĕç. Вĕсемпе Шупашкарти гражданла оборонăн курсĕсен ертӳçи Е.Н. Южалин тата унти преподаватель Н.В. Батракова тĕплĕ калаçу ирттерчĕç. Каласа хăвармалла, халăха гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе вĕрентсе хатĕрлессипе район администрацийĕ Шупашкарти гражданла оборона курсĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлет. Заняти питĕ интереслĕ иртрĕ. Статистика материалĕсемпе тата пурнăçра пулса иртнĕ тĕслĕхсемпе пуян пулчĕ вăл. Ача сачĕсен заведующийĕсенчен чылайăшĕ курс ĕçченĕсене хăйсем патне заняти ирттерме пыма калаçса татăлчĕ.

**– Хăрушсăрлăх ыйтăвĕпе районти ытти предприятипе организацисенче мĕнле ĕçлеççĕ?**

– Районти предприяти-организаци ертӳçисемпе те çакнашкал вĕренӳсем ирттеретпĕр районта. Вĕсене Шупашкарти асăннă курссенче ĕçлекенсене чĕнетпĕр. Юлашки 2 çул хушшинче гражданла оборона ыйтăвĕсемпе пĕчĕк предприятисен ертӳçисемпе, фельдшерпа акушер пункчĕсен, Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсен магазинĕсен заведующийĕсемпе, çавăн пекех районти гражданла оборонăн суту-илӳпе апат-çимĕç службин штатра тăман аварипе çăлакансен формированийĕсен командирĕсемпе тата личнăй составĕсемпе те вĕренӳ ирттернĕ.

**– Тавах, Николай Панфилович, калаçушăн.**

**Л. ТУКТИНА калаçнă.**

**Юбилей**

## Саламлатпăр



Муркаш районĕнчи Тăмкасси ялĕнче пурăнакан **Любовь Емельяновна ВАСИЛЬЕВАНА** пуш уйăхĕн 19-мĕшĕнче 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх сунатпăр, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сĕнетпĕр.

Эсĕ – пирĕн савăнăç, телей, эпир санпа савăнатпăр, мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсемпе пускилсем.**

## Çырăнтару – 2008
## Хакланиччен çырăнма тăрăшăр

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2008 çулхи иккĕмĕш çур çулта июль уйăхĕнчен илсе тăма апрелĕн 1-мĕшĕччен унччченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăхлăх çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус. Хыççăн вара çырăнтару хакĕ ӳсет. Çавăнпа та район хаçатне хальтерех çырăнса илме тăрăшăр.**

**Кунсăр пуçне хаçата «Чăвашпичет» киоскĕсенче те çырăнма пулать. Вĕсенче çырăнтару хакĕ йӳнĕрех.**

**Райхаçат редакцийĕ.**